Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N30 (4599) *1998 çулхи март (пуш) уйăхĕн 18-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*

## Тĕлпулу хыççăн

## “Эсир тĕнчере пурри питĕ лайăх”

**Тутарстан Республикин Президенчĕ М.Ш.Шаймиев Хĕрарăмсен кунĕ - Мартăн 8-мĕшĕ умĕн республикăн чи тивĕçлĕ те активлă представительницисемпе тĕлпулусемирттересси йăлана кĕчĕ. Кăçал çак чаплă тĕлпулăва пирĕн районтан 6 çын хутшăнчĕ. Эпир вĕсенчен хăш-пĕринчен унта пулса иртнипе паллаштарма ыйтрăмăр.**

**Ф.Р.НОГУМАНОВА,** ***район - администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ.***

- Делегаци валли программăна мартăн 5-мĕшĕнче каçранах [illegible]чăччĕ. Эпир Тетĕш районĕн представителĕсемпе пĕрле авиастроительсен районĕнчи моторсем туса кăларакан заводра пулса, унта вăй хуракансен ĕç условийĕсемпе паллашрăмăр, музейра пулса куртăмăр. Тĕлпулу уяв сĕтелĕ хушшинче кăмăллă калаçса ларнипе вĕçленчĕ.

Мартăн 6-мĕшĕнче Тутарстан Республикин Патшалăх пысăк концерт залĕнче Президентпа тĕл пултăмăр. Минтимер Шарипович ăш[illegible]н саламлани пир[illegible] кашнине хумхан[illegible]тарчĕ. Унтах “Çулталăкри хĕрарăм” конкурсăн итогĕсене пĕтĕмлетрĕç. Пирĕншĕн ырă самантсем сахал мар пулчĕç: пирĕн хĕрарăмсем, тĕпрен илсен, Л.Н.Газизуллина, Ф.Я.Мухамметова, Л.Ю.Хайруллина çак конкурса хутшăнса, малти вырăнсене йышăнаймарĕç пулин те, Президентăн сăмахĕсем чĕрене хускатрĕç.

Уяв каçĕ концерт номерĕсемпе пуянччĕ, пире пысăк савăнăç кӳчĕ, кăмăла çĕклерĕ.

**В.Г.ХОМЕНКО,** ***республикăри “Тутарстан хĕрарăмĕсем” организацин районти хĕрарăмсен совечĕн председателĕ, Пенси фончĕн районти тĕп уполномоченнăйĕ.***

- Пире, хĕрарăмсене, столица чи хаклă хăнасем пек кĕтсе илчĕ. Президентпа тĕл пулни питĕ чаплă иртрĕ. Унăн кашни саманчĕ, кашни мероприятийĕ хĕрарăманнене, хĕрарăм-ĕçчене мухтаса аслăларĕ, пысăка хучĕ. Хĕрарăмăн çемьери, обществăри рольне пысăк хак пачĕç. “Çулталăкри хĕрарăм” конкурс та пирĕн хĕрарăмсен потенциаллĕ майĕсене, вĕсен активлăхне палăртассине пăхса хăварнăччĕ.

**Н.В.КОННОВА,** ***2-мĕш номерлĕ шкул-гимназин физика учителĕ, Соросовски премийĕн лауреачĕ.***

- Тĕлпулу асран тухман шухăш-кăмăл çуратрĕ. Вăл пирĕн Президентăн ыркăмăллăхне, унăн ăслăлăхне туйма май пачĕ. Минтимер Шарипович хĕрарăм-анне, йăмăксемпе аппасем çинчен каланă май, вĕсене çав тери хисеплени сисĕнчĕ. Тĕлпулу икĕ чĕлхепе пычĕ, хутсăр, чун-чĕререн, кашни наци представительницине пĕр пек хисеплесе тимлĕх уйăрни палăрчĕ. Хĕрарăм хăйĕнпе юнашар чăн-чăн арçын пулсан кăна хăйне телейлĕ туять вĕт - çак пĕрре пăхма ансат чăнлăх пирĕн Президент тухса калаçнинче те илтĕнчĕ. Çакă тепĕр шухăш çуратать: тен, малашне “Çулталăкри арçын” конкурс йĕркелемелле? Кунта та хĕрарăмсен палăрнă пулĕччĕç. Эпĕ кăна мар çапла шутлатăп. Пĕтĕмĕшле каласан вара, тĕлпулу маншăн чăн-чăн уяв пулчĕ, манра ыранхи куна çирĕп шанăç туйăмĕ çуратрĕ. Çапла хавхалантарма пире, хĕрарăмсене, кăшт тимлĕх уйăрни те çителĕклĕ вĕт.

## “Нурлат сэте” “çăралать”

Районти хуçалăхсенче туса илекен сĕт çулăхĕ, малтанхи пекех базисринчен çӳллĕрех тăраканскер, çинчен калаçмастпăр кунта. Сăмах “Нурлат сэте” АО акционерĕсен шутне суту-илӳ тăвакан хăш-пĕр организацисенче кĕскетни çинчен пырать.

Эпир пĕлнĕ тăрăх, çак акционер обществине пĕлтĕр çуркунне тунă, çавăн чухнех тупăша продукци туса кăларакан, ĕçлесе хатĕрлекен тата сутакан предприятисем хушшинче пропорциллĕ пайлама калаçса татăлнă. Иртнĕ эрнере пулнă акционерсен пухăвĕнче вара ассоциаци совечĕн, пурнăçлакан совечĕн, ревкомисси, бухгалтери составĕсене кăна мар, АО Уставне те пысăк улшăнусем кĕртнĕ. Халĕ çĕнĕ положенипе сĕт сутнин тупăшĕн 64 процентне хуçалăхсене куçарĕç, 32 процентĕ сĕт-çу комбинатĕнче юлĕ. Çак вăхăтран комбинат хăйĕн патĕнче туса хатĕрленĕ сĕте тата сĕт продукчĕсене хăйĕн магазинĕсем урлă сутĕ. Малтанхи положенипе вара тупăшăн 8 процентĕ сутакан организацисенче юлатчĕ.

## Эпĕ çар çынни пулăттăм...

Вĕренме ăçта каймалла? Мĕнле професси суйласа илмелле? Кам пулмалла? Çак ыйтусем халь ытларах аслă классенче вĕренекенсемшĕн çивĕч тăраççĕ, экзаменсемччен вăхăт нумай юлмарĕ. Пĕр енчен, аслă, ятарлă вĕренӳ заведенийĕсем халь нумай - хăть хăшне суйла. Анчах хальхи вăхăтра аслă шкула вĕренме пурте кĕреймеççĕ вĕт-ха. Çар вĕренӳ заведенийĕсенче вара вăтам пĕлӳллĕ çамрăксем пурте вĕренме пултараççĕ, паллах, кăмăл тата сывлăх пулсан ĕнтĕ. Шăпах çак ыйтусемпе ĕçлеççĕ халь çар комиссариачĕн ĕçченĕсем: хăйсен пурнăçне çар ĕçĕпе çыхăнтарас текен çамрăксене йышăнаççĕ.

Вĕренӳ заведенийĕсем Раççейре пур çĕрте те пур. Хальхи вăхăтра вĕренме каяс текен 15 яша палăртнă.

1981 çулта çуралнă тата аслăрах яшсене йышăнаççĕ.

** КУН хыççăн КУН*

## Тутарстан продукцийĕ - Ĕпхӳре

**Ĕпхӳре “Агро-98” пĕтĕм тĕнче выставки пулнă. Унта Тутарстан предприятийĕсем те хутшăннă.**

“Казанский мясокомбинат” акционер обществи выставкăра çĕре яхăн тĕрлĕ продукци кăтартнă. Вĕсен хушшинче тĕтĕмленĕ “Ойогус” лашан аяк шăмми, çурма тĕтĕмлетнĕ “Тукрык” тата “Татарстан” кăлпассисем. "Казанский молочный комбинат" акционер обществи Ĕпхӳре хусансем тахçанах çиекен сырсене, ириссене, шерпетсене кăна мар, çĕнĕ “Здоровье” муса, “Лакомка” пастăна, “Байрам” тăпăрчă тортне кăтартнă. “Заря” акционер обществин те хăйĕн павильонĕ пулнă. Раçсейри кондитерсен фабрикисен шутĕнче “Заря” пирвайхи чаплă теçеткене кĕрет. Вăл выставкăра хăй кăларакан мĕнпур продукцие тăратнă. Вĕсен хушшинче “Мой Татарстан”, “Сабантуй”, “Любимый город” сувенир наборĕсем, “Алтынчеч”, “Петрушка” шоколад конфечĕсем.

## Тимĕрçĕ ĕçĕн ăстаçи

***Тимĕрçĕ профессийĕ ялта яланах кирлĕ пулнă. Акă халь те, çĕннине туянма май çуккипе юрăхран тухнă техника хăйсен вăйĕпе, тимĕрçĕ пулăшнипе юсаççĕ. Ку ĕç тĕлĕшпе лайăх специалист пур хуçалăхсене вара ăмсанмалли кăна юлать. Хресченсен хуçалăхĕсен “Игенче” ассоциацийĕнче Вазых Валиахметов тимĕрçĕн ĕçĕпе питĕ кăмăллă. Çак ăстаçăн алли витĕр мĕн чухлĕ тĕрлĕ деталь иртмест пулĕ, вăл хутшăннипе ял хуçалăх техникине ĕçе юрăхлă тăваççĕ, вăл хăй тĕллĕн чылай ĕç пурнăçлать. Çурхи хире пĕрремĕшĕсем пулса илсе тухакан сӳресене те тимĕрçĕ лаççинче кăна юсаççĕ. Вĕсене майланă вăхăтра Ислам Галимовпа Тагир***



*Сунгатуллин, каярах Айрат Фахреев та вăйĕсене шеллемесĕр тăрăшнă. Сеялкăсемпе культиваторсене юсакансем те машинăсен кукăрăлнă деталĕсене тимĕрçĕ лаççине илсе пынă. Хальхи вăхăт тĕлне çаклатса ярса ĕçлемелли хатĕрсене юсаса пĕтернинче Вазых Валиахметовăн тӳпи пысăк.*

*Ӳкерчĕкре: В.Валиахметов.*

*Н. Азизов сăнӳкерчĕкĕ.*

## Йӳнĕ хакпа çырăнса юлма васкăр!

**Районта тухса тăракан “Дуслык” (“Дружба”, “Туслăх”) хаçата 1998 çулхи иккĕмĕш çурçуллăха йӳнĕ хакпа çырăнтарасси çинчен пĕлтеретпĕр.**

**Çырăнтару мартăн 16-мĕшĕнчен тытăнса 25-мĕшĕччен пырать. Çырăнтару хакĕ - 19 тенкĕ те 40 пус (çĕнĕ укçапа).**

**Хаçата районти çыхăну узелĕнче, почта çыхăнăвĕн мĕнпур уйрăмĕсенче çырăнма пулать.**

**Хисеплĕ вулакансем, эсир пирĕн хаçата чи йӳнĕ хакпа çырăнса, яланах район хыпарĕсене пĕлсе тăма пултаратăр!**

Селекторлă канашлуран

# ПРОФСОЮЗСЕМ ХĂЙСЕН ПРАВИСЕНЕ ХӲТĔЛЕÇÇĔ

**Раççейри профсоюзсен ирĕклĕ федерацийĕ апрелĕн 9-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри протест акцине иртересси çинчен пĕлтерчĕ. Çакна май ун тĕлне хатĕрленессипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явма чĕнсе, вăл мартăн 11-мĕшĕнче селекторлă канашлу иртерчĕ. Районти çыхăну узелне те районти профсоюз комитечĕсен председателĕсем килчĕç.**

Селекторлă канашлăва Раççейри профсоюзсен лидерĕ Шмаков уçрĕ. Вăл тухса калаçнинчен çакă палăрчĕ: Раççейри профсоюзсен протест акцине иртернин сăлтавĕ - ĕç çыннисене ĕç укçине вăхăтлă тӳлеменни. Иртнĕ çул мартăн 27-мĕшĕнче иртернĕ Пĕтĕм Раççейри протест акцийĕ хăйĕн тĕллевне пурнăçлайман: ку ыйту тĕлĕшпе нимĕнле улшăну та палăрман. Пачах урăхла, ĕç укçи парăмĕсем çак вăхăтра тата та ӳснĕ, ĕç çукки пăшăрхантарать. Çавăнпа та кăçалхи протест акцийĕ анлăрах иртĕ, мĕншĕн тесен Раççейри финанспа экономика ларутăрăвĕ йывăр-ха, ĕç çыннисен пурнăç условийĕсем кунран-кун япăхланаççĕ. Апла пулсан, ĕç укçи парăмне çитес вăхăтра тӳлесе татасси тĕп требовани шутланать.

Мускав, Санкт-Петербург, Рязань, Иркутск, Алтай, Хабаровск, Воркута... Çаксем, тата ытти чылай хула селекторлă канашлăва хутшăннă - унта митингсем, пикетсем иртеççĕ, ĕç çыннисем апат йышăнма пăрахаççĕ... Шахтерсем, учительсем, врачсем тата ыттисем... Вĕсем пурте акци иртерессипе килĕшсе, ăна пĕтĕм çĕршывĕпе иртерме хатĕрленни çинчен пĕлтернĕ.

Тутарстан Республикин профсоюз федерацийĕн председателĕ Ф.Гайнуллина та çак шухăшпа килĕшни çинчен пĕлтерчĕ. Пирĕн республикăра ларутăру ытла йывăр марха ĕнтĕ. Çапах, вăл палăртнă тăрăх, Тутарстан Республикин экономикинче ларутăру лайăх енне кăшт улшăннине пăхмасăр, юлашки вăхăтра граждансен конституци прависене час-часах пăсни сисĕнет. Уйрăмах промышленность сферинче, ял хуçалăхĕнче... Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, ĕçри хирĕçӳсен шучĕ 10 хут ӳснĕ.

Республикăри профсоюз органĕсем сӳрĕклĕх кăтартнине палăртса, вăл ĕç çыннисен прависене хӳтĕлессинче вĕсен витĕмĕ тата пĕлтерĕшĕ пысăках марри çинчен каларĕ, ĕç укçин парăмĕсене тӳлесе татассипе çыхăнну ыйтусене татса пама Тутарстан Республикин Президентне М.Шаймиева кăна шаннине пĕлтерчĕ. Ун хыççăн, республика профсоюзĕсен коллеги решенине тĕпе хурса, апрелĕн 9-мĕшне иртерме палăртнă акцие ырлама чĕнсе каларĕ.

Нурлат районне илсен вара, пирĕн ĕç укçи тӳлессипе ĕçсем республикăринчен лайăхрах. Шăпах çак шухăша палăртса хăварчĕç район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Ф.Р.Ногуманова тата АПК профсоюзĕсен председателĕ Г.К.Пакшин, селекторлă канашлăва хутшăннăскерсем.

Хресченсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсенчен чылайăшĕ 1997 çул пухса илнĕ тыр-пула сутнă укçатенкĕпе ял çыннисене парăмăн пĕр пайне парса татнă. Пысăк парăмлă "Сельхозтехника" АО, "Агрохимсервис" АО, МТС та вăхăтра йывăр ларутăруран тухмалли çул-йĕр тупнă. Хăш-пĕр промышленность объекчĕсенче вара çак ыйту чылай çивĕч тăрать. Тĕслĕхрен, сахăр завочĕ (парăм ноябрьтен ӳсет) вăрман хуçалăхĕ, машинăсем тăвакан завод, малтанхи МСОн мĕнпур строительство организацийĕсемпе подразделенийĕсем, 127-мĕш ПМК, "Агропроммехмонтаж" АО тата ытти предприятисем ĕç укçине тӳлес тĕлĕшпе пысăк парăмра. Çакăнтах "Нурлатнефть" НГДУ тата "Нурлатнефтешырав" ООО та кĕреççĕ.

Пĕтĕмĕшле районти ĕçсен лару-тăрăвне шута илсе, канашлăва хутшăннисем çакăн пек калаçса татăлчĕç: Раççейри профсоюзсен протест акцине хутшăнмасан та юрать, çапах та парăмлă предприятисенче пухусем иртермелле.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**

# "ОПТИКА" çынсене кирлĕ

Пирĕн хулари хăш магазинăн аналогĕсем çуккине пĕлетĕр-и эсир?

Тĕрлĕ шухăшласа пăхрăр-и? Тĕрĕс, ку "Оптика". 94-мĕш номерлĕ аптека çумĕнчи çак пая 1970 çулта йĕркеленĕ, анчах халĕ те вăл районта куçлăхсем хатĕрлекен пĕртен-пĕр вырăн шутланать.

Çавăнпа та çак ирĕкех мар пĕчĕк магазинта пысăк черет пулмасан та, унта закзчиксем килсех тăраççĕ. Пĕрисем куçлăх харшине тĕплĕн суйлаççĕ, теприсем хатĕр заказа илеççĕ, виççĕмĕшĕсем линзăсем пăхаççĕ. Куçлăх харшисем вара халь яланах пур, оптикăра сире Англири "Vision" фирмăн, Италири "Borsalino" е нимĕçсен "М.Бадер" фирмăн 30 тенкĕллисене (деноминациленĕ укçапа) сĕнĕç. Кунта ĕçлекенсем заказсене талăк хушшинче пурнăçлаççĕ, çавăнпа та "Оптика" çинчен лайăхпа кăна калаçаççĕ. Коллективра хĕрарăмсем кăна ĕçлеççĕ: Александра Цыганова заведующи, Татьяна Агапова сутуçă, куçлăхсем пухакансем Вера Моисеевапа Татьяна Кочнева. Вĕсенчен кашни хăйсен ĕçне питĕ лайăх пĕлет, вăхăтлă та паха тăвать. Магазин хăйĕн программине ăнăçлă пурнăçлать - куçлăх аслисене те, ачасене те, çаплах операци хыççăнхисене те кирлĕ. Çак пĕчĕк коллектив 1997 çулхи тавар çаврăнăшне 109 процент пурнăçланă, çапла майпа тупăш çумне 22 миллион тенкĕ (киввипе) хушăннă.



Куçлăхсен чи йӳнĕ хакĕ 50-55 тенкĕ. Хаклăрах заказсем те пур - 180 тенке çити. Кĕскен каласан, ку заказчикăн енчĕк шайĕнчен килет. Оптиксем шутланă тăрăх, ял çыннисемшĕн 50 пин тенкĕ те хаклă. Анчах та магазинта хаксене улăштараймаççĕ - кунта прейскурантсене Хусанти "Оптика" сутуилӳпе производство предприятийĕ ОООран илеççĕ.

Сервис лайăх енне улшăнать, витринăн кĕленчи айĕнче куçлăхсем валли тĕрлĕ "хваттерсем" тата çемçе замша салфеткăсем курма пулать. Куçлăх харшисене тата ытти таварсене "çаврăнăш" майĕпе: Аксу - Чистай - Альметьевск тата ытти çĕртен уйăхра икĕ хутран кая мар илсе килеççĕ.

Александра Николаевна кунта пĕрремĕш кунранпах вăй хурать, пысăк опыт пухнă. Вăл тата унăн ĕçтешĕсем юлашки çулсенче ачасем валли куçлăх ытларах туяннине асăрхаççĕ, çакна вĕсем районти тĕп больницăра ача-пăчасен окулисчĕ ĕçлеме тытăннипе тесе шутлаççĕ. Шкулта вĕренекенсене халь тĕплĕнрех тĕрĕслеççĕ, "Оптикăра" маларах вĕсем валли йӳнĕ, çаврака куçлăхсем туяннă пулсан, халь вара - астигматикăллисене. Ку тĕлĕшпе оптика йывăртарах: кĕленчисене уйрăм градуспа тумалла. Кăткăсрах заказсене пурнăçлама Хусана е Чулхулана ярса параççĕ. Ун чухне вара заказа вăхăтлă пурнăçласси Нурлатри оптиксенчен килмест.

Коллективра ĕçлĕ лару-тăру хуçаланать. Кунта пĕр-пĕрне ăнланса, килĕштерсе вăй хураççĕ. Пурте лăпкă та таравтлăскерсем. Чăтма çук тарăхса çитсен те, хăйсем начар кăмăллă пулнине кăтартас мар тесе тăрăшаççĕ. Çавăн пек чухне воспитани тата сăпайлăх тĕлĕшпе уйрăм шкул пĕтернĕ пек туйăнать. Интеллигентлă Николай Иванович Лесняковăн шкулне. Шăп кăна вăл тăрăшнипе 28 çул каярах оптика пайне йĕркеленĕ. Вăл вара çынсене халĕ те кирлĕ.

**Т.НАЗАРОВА.**

**Ӳкерчĕкре: Т.АГАПОВА.**

## Пултарулла ачасем

### РОО хыпарĕсем

Пултарулла та талантлă ачасем çинчен сăмах хускатсан, чи малтан эпир ăслă шухăшлакан, лайăх ташлакан тата юрлакан ачасене аса илетпĕр. Шел пулин те, çакăн пек пултарулăх пурин те пулмасть, çавăнпа та шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсенче ачасене аталантарассине пысăк тимлĕх уйăрсан тата вĕсен пултарулăхне вăхăтлă асăрхасан, вĕсем валли мĕнпур условисем туса парсан питĕ лайăх пулмалла. Çакна Нурлатри условисенче те тума май пуррине нумаях пулмасть "Сказка" шкул ача сачĕн бази çинч[е] иртнĕ ача-пăча сачĕсен заведующийĕсен методика пĕрлешĕвĕн черетлĕ ларăвне хутшăнакансем хăйсем курса ĕненчĕç. Кунта вĕсем хăйсене халап тĕнчине лекнĕ пекех туйрĕç: вĕсен умĕнче ахаль туратсенчен тунă тĕрлĕ япаласем, чечексем, стенасене пĕлсе капăрлатнă, ачасем пурте илемлĕ тумланнă. Малтан вĕсем Н.В.Сакаева воспитательницăн вăтам группинче уçă занятире пулчĕç. Ачасем "Ачасен хĕллехи вăййисем" картина пирки хăйсен шухăшне пĕлтерчĕ[ç], вĕсем хăйсем сăнам[а]н шухăшлама пĕлнине кăтартрĕç. З.З.Арсланбекова воспитательница "Телефон" темăпа иртернĕ заняти те интереслĕ пулчĕ, çакă ачасен творчествăлла активлăхне ӳстерет. Н.А.Аввакумовăн урокĕ тата та илĕртӳллĕ пулчĕ, кунта актер ăсталăхĕ тата музыкăпа театр пултарулăхĕ палăракан ачасем "Ĕç вăрманта пулса иртнĕ" музыкăлла халап кăтартрĕç. Вăл пурне те килĕшрĕ. Музыка ертӳçи С.Н.Пратестене йĕркеленĕ ачасем кăтартнă концерта та пурте кăмăлласа, чунчĕререн савăнса пăхрĕç. Учрежденин воспитателĕсемпе педагогĕсем декорацие пĕлсе капăрлатни тата ачасен илемлĕ тумĕ те вĕсен ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнчĕ. Кĕскен каласан, "Сказкăра" ачасен пултарулăхне палăртма тата аталантарма пĕлеççĕ.

**Р.ГИНЯЕВА.**

# Вăрлăх çинчен мĕн пĕлетпĕр?

Паллах, килти пахчара туса илнĕ сортсенчен вырăнтах вăрлăх хатĕрленине нимĕн те çитмест. Анчах та ĕçĕ те, вăхăчĕ те нумай каять тесе ытларахăшĕ вăрлăха туянма тăрăшать. Унсăр пуçне тĕрлĕ сортсем пĕр-пĕринпе хутăш тусанланма пултарнине те манмалла мар. Шел те, чылай пахчаçă çакна пачах шута илмест.

Сăмахран, хĕреслĕ чечеклĕ чылай пахча çимĕç культури пĕр-пĕринпе, ял хуçалăх уйĕсенче ӳсекен рапспа, анра çарăкпа тата ытти çум курăксемпе те хутăш тусанланма пултарать. Сăмах май, çум курăксемпе ытти хăш-пĕр пахча çимĕçсем те хутăш тусанланма пултараççĕ. Апла пулсан, хĕреслĕ чечеклĕ сортсенчен пахчаçăн килте пĕр-пĕринпе хутăшман икĕ культурăран ытла ӳстерме кирлĕ мар.

Вăрлăхлăх ӳстернĕ чух çак культурăсем хăйсемпех хăрасах тусанланма пултараççĕ:

пур йышши купăстасем;

кăшманпа редис;

йӳç кăшманпа çарăк, рапс, турнепс, пекин купăсти;

йӳç кăшманпа кольраби;

çарăкпа тунепс, пекин купăсти, рапс.



Йӳç кăшманпа рапса, купăстапа çарăк гибричĕ, турнепса вара пысăк тухăçлă çарăк тесе шутлаççĕ. Çавăнпа та вăрлăхлăх купăстапа асăннă çак культурăсене каллех пĕрле лартса çитĕнтерме юрамасть. Апла-тăк, пĕр-пĕр вăрлăхлăх купăстана кăшманпа е редиспа кăна ӳстерме юрать, анчах вĕсене те юнашарах вырнаçтармалла мар.

Кашни çулах пĕр йышши культурăсемпе пĕр сортсенех ӳстерни те тĕрĕсех мар. Çавăн пекех пахча çимĕç вăррисене чылай çулсем хушши упрама та кирлĕ мар.

Пахча çимĕç вăррисене миçешер çул упрама юрать-ха?

Хăяр, кабачок, патиссон, кавăн - 6-8 çул;

купăста, помидор, пăрçа, фасоль, нимĕç пăрçи, редис, йӳç кăшман - 3-5 çул;

кишĕр, çарăк, пăрăç, кăшман, баклажан, шпинат - 3-4 çул;

сухан, петрушка, укроп, кăшкар ути, кресс-салат - 2-3 çул;

пастернак, сельдерей - 1-2 çул.

*Юсав ĕçĕсене хăвăртлатмалла

# Çуркунне васкатать

Уй-хирсенчи çурхи ĕçсем тĕлне техникăна хатĕрлесси кăçал кăткăс пырать. Иртнĕ кĕркунне çĕртме сухи тата чĕкĕнтĕр кăларасси вăраха тăсăлни, çак ĕçсене питĕ йывăр çанталăк условийĕсенче ирттерни пĕр енчен тракторсем питĕ кивелнин сăлтавĕ пулса тăнă, тепĕр енчен - ĕç хатĕрĕсене хĕле упрама вăхăтлă лартма кăткăслатнă. Çапах та йĕркелĕх кăтартнă хуçалăхсенче юсава кая юлса пуçăннă пулин те, çаклатмалли машинăсене "ура çине" тăратма ĕлкĕрнĕ. Çавăнпа паянхи куна хуçалăхсенчен чылайăшĕнче çурхи хирте ĕçлемелли хатĕрсене юсаса пĕтернĕ - сӳресене, культиваторсене тата тĕштырă сеялкисене. Анчах ял хуçалăх управленийĕнчен панă даннăйсенчен çакă паллă: "40 лет Победы", "Черемшан", Заря", "Тĕрнеç" хуçалăхсенче культиваторсен хатĕрлĕхĕ пурĕ 50-60 процент шутланать, М.Джалиль ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вара сеялкăсемпе ĕç çавнашкал, пĕрремĕш икĕ хуçалăхра сӳресене юсасси пĕчĕк шайра пулни пăшăрхантарать. Çапах та уйри тĕп вăй - тракторсен шайĕ уйрăмах шухăшлаттарать. Юсав ĕçĕсене çулсерен пысăк тимлĕх уйăракан хуçалăхсенче, вĕсен шутĕнче "Рассвет", РСУн хушма хуçалăхĕ, "Заветы Ильича", çаплах "Агрохимсервисăн" хушма хуçалăхĕ, ĕçлекен тракторсенчен çурри ытла хатĕрлĕх линейки çинче. Кунта "Комбайна" уйрăм палăртмалла, хуçалăхра пĕлтĕрхи ака тĕлне пĕр трактор та юсаманччĕ, кăçал вара юсав ĕçĕсене тивĕçлипе йĕркеленĕ. Ку енĕпе ĕçсем "Киклĕ", "Игенче", Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче лайăх пыраççĕ. Анчах "40 лет Победы", "Элмет", Хафизов ячĕпе хисепленекен, "Тан", сĕт-çу комбиначĕн, нефтебазăн, сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕсенче, уйрăмах "Черемшанра" тракторсене юсасси кăткăс лару-тăрура.

Çуркунне васкатать. Çавăнпа та ял ĕçченĕсен пăшăрханăвне ăнланмалла ĕнтĕ, ака вăхăчĕ çитет вĕт. Укçа çук, пурте хаклă, çавăнпа та тракторсене запас пайсемпе тивĕçтерме йывăр. Чăнах та, пĕлтĕр район ертӳçисем хуçалăхсене çак ыйтусене татса пама майсем тупрĕç, кăçал та кирлĕ мерăсем йышăнма тăрăшаççĕ. Тĕпрен илсен, минераллă удобренисем турттарассишĕн тăрăшнă, халь вĕсене вырăнсенче кирлĕ пек упрамалла тата пĕлсе усă курмалла. Çав вăхăтрах сăмах вĕсене агрегатсене мĕнле меллĕрех тиессине тивĕçтересси çинчен пырать. Пĕлтĕр, шăп кăна погрузчиксем çитменнипе тата пуррисемпе тухăçлă усă курманнипе хăшпĕр агромероприятисене пурнăçласси вăраха тăсăлнă. Çавăнпа пĕрлех тепĕр кирлĕ мероприятие - хире тухмалли ĕç хатĕрĕсене агрегатламалли вăхăт çитнĕ. Анчах та ку ĕçе пур çĕрте те тытăнайман, мĕншĕн тесен, пĕрчĕллĕ культурăсене акакан сеялкăсене хатĕрленипе пĕрлех пропашной тата техникăлла культурăсене акакан сеялкăсене ĕçе юрăхлă тумалла пулнă.

Çавăнпа пĕрлех ака вăхăтĕнчи ытти ĕçсем çинчен те манмалла мар.



## ÇĔР ХУÇИСЕМ

*Нурлатри МТСăн пĕрлештернĕ отрячĕн членĕсем Анатолий Кадяшевпа Олег Юхмальчин комбайнерсем тата Ильхам Мифтахутдинов [illegible]чакан иртнĕ çулхи тухăçа пухса кĕртнĕ вăхăтра ыvăннине пĕлмесĕр ĕçленĕ. Вĕсем сакăр çул хушши усă курнă "ДОН-1500" комбайнăн бункерĕнчен 12066-9970-шер центнер тырă пушатнă.*



## Талантсем

# Янăра, хут купăс...

Пирĕн ялсенче "Выля, юратнă хут купăс" передачăна килĕштермен çын çук та пулĕ. Ăна пурте хаваслансах пăхаççĕ. Юратнă купăсăн чун-чĕрене ăшăтакан сассине илтсен, кăмăл-туйăм ăçтан ан çĕклентĕр!

Çак передачăна курнă чухне эпĕ яланах Пӳлеркӳлĕнчи культура çуртĕнче иртнĕ художество пултарулăхĕн зонăри смотрне аса илетĕп. Унта Пӳлеркӳлĕнчи, Чулпанти, Гайтанри, Салтакъелĕнчи купăсçăсем хутшăннăччĕ. Наум Семенович Никитина жюри пĕрремĕш вырăн панăччĕ. Ун чухне вăл купăспа вырăс халăх юррисене шăрантарнăччĕ, юлашкинчен вара хастаррăн ташласа та панăччĕ.

Ытти ялсенче те хăйсен юратнă купăсçисем, халăх хисеплекен пултаруллă çынсем пур. Чулпанта акă, ман шутпа, чи паллă купăсçă Иван Дегтев. Вăл питĕ ăста хайлавçă, хăй те çапла калать: "Мĕн шухăшланине алă каласа пĕлтертĕр тесе эпĕ купăса тикĕссĕн сарса яма юрататăп..."

Пӳлеркӳлĕнчи Никитин вара халăха чăннипех тĕлĕнтерет. Пĕлтĕр, тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра, хресченсен хуçалăхĕсен "Урняк" ассоциацийĕн правленийĕ столовăйра художество пултарулăхĕн концертне йĕркеленĕччĕ. Вăл апат вăхăтĕнче пĕр сехете яхăн пычĕ, пĕтĕм юрăпа ташă номерĕсене Наум Семенович купăс каласа илемлетрĕ. Механизаторсем питĕ савăннăччĕ. Пирĕн купăсçă çинчен каласа хăварам-ха: районти нумай ялта вăл клуб заведующийĕ пулса ĕçленĕ (хăй агронома вĕреннĕ, çапах музыкăна килĕштерни çĕнтернĕ), ял маевкисене, акатуйсене, "Выля, хут купăс!" конкурссене активлă хутшăнать. Ялти пĕр туй та унсăр иртмест - çынсен кăмăлне лайăх сисет, хăçан, кам валли тата мĕн каламаллине пĕлет, çавăнпа та ялта ăна юратаççĕ.

Халăх хăйĕн хăйне евĕр таланчĕсене хисеплет.

### РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

# Тăрăшса ĕçлеççĕ

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессинче халь явапла тапхăр - выльăхсене хĕл каçарасси пырать. Пирĕн хуçалăхра дояркăсем хушшинче Аклима Миндубаева малти вырăна тытса тăрать. Вăл пĕрремĕш хут пăрулана ĕнесене пăхать, талăкра пĕр ĕнерен 12,5 килограмм сĕт суса илет. Гульчачек Насыбуллинан, Аклима Шигаповапа Гульсум Салахован ушкăнĕсенче çак кăтарту 11-10,5 килограмм шутланать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре вăтăр çула яхăн вăй хунă çак хĕрарăмсем 1997 çулхи результатсемпе те хуçалăхра малти вырăнсене йышăнчĕç. Халĕ те вĕсем вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Пăру пăхакансем Искра Зайдуллина, Минсара Лукманова та ырă сăмахсене кăна тивĕç. Пăрусем тĕрĕс-тĕкел те самăр ӳсчĕр тесе вĕсем нумай тăрăшаççĕ.

З.ИСМАГИЛОВА.
"Татарстан" ассоциаци.

### РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

# Пире пулăшакан Райхана

"Афган" поселокĕнче пурăнакансем çапла час-часах калаççĕ.

Урăхла мĕнле-ха, çуркуннепе кĕркунне тата хĕллехи çилтăманра çуран та, машинăпа та иртме çук микрорайонта телефон çыхăнăвĕ, фельдшер пункчĕ, аптека çук, чирлекенсенчен кашни вара пулăшу ыйтма терапи уйрăмĕнче медсестра пулса ĕçлекен Райхана Рахимкулова патне каять. Вăл вара пулăшма яланах хатĕр, канаш та парать, кирлĕ пулсан юн пусăмне виçет, пур эмелне парать.

Райхана çемйи кунта темиçе çул каялла ăшă çĕртен куçса килнĕ, çурт тунă. Поселокра пурăнакансем ырă та ялан пулăшма хатĕр медсестрана питĕ хисеплеççĕ, Райхана пĕлтĕр медсестрасен районти конкурсĕнче III вырăн йышăнни питĕ савăнăçлă хыпар пулчĕ.

С.УСМАНОВА.

## Фестивальте пĕрремĕш хут

Мартăн 6-7-мĕшĕсенче Çыранçи Чаллăра Тутарстан Республикин кĕрешӳçисен уçă фестивалĕ "Кикбоксинг - наркотиксене хирĕç" девизпа иртрĕ. Турнира Тутарстан, Пушкăртстан, Удмурти, Ульяновск тата Тюмень облаçĕсен представителĕсем килчĕç. Нурлат хулин чысне ДЮКФП (каратэ) тата "Родник" клуб (кикбоксинг) представителĕсем хӳтĕлерĕç. Кун пек шайра пирĕн ачасем пĕррремĕш хут кĕрешрĕç. Ăмăртусем икшер минутлăх виçĕ раундпа, Олимп системипе иртрĕç, кунта вара выляса яни кĕрешӳрен тухать. Ринг çине малтан Г.Губайдуллин тата К.Рождестенский (Çыранçи Чаллă) тухрĕç. Рустем каратэпе иккĕмĕш çул кăна хатĕрленет пулин те, кĕрешӳ çивĕч пулчĕ. Кикбоксинг вăййин икĕ хутлă чемпионĕ А.Васьков тата Г.Ивлев (ДЮКФП) хушшинчи кĕрешӳ тата интереслĕрех пулчĕ, ăмăрту умĕн Геннадий гриппа чирленĕ, апла пулин те ăна вăл палăртмарĕ, хăйпе ăмăртаканăн титулĕсем те ăна хумхантармарĕç. Çапах та кунта Хусан хулинче пурăнакан А.Васьков çĕнтерчĕ. Н.Ткаченко ("Родник") хăй питĕ лайăх хатĕрленнине семи çыхăнура кăтартрĕ, ăмăртура çак виçе категорийĕнче унпа танлашаканни çуккине кăтартса пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Пирĕн пĕртен-пĕр хĕр Ольга Ендирякова ("Родник") семи çыхăнура Ульяновск хулинчи тĕнче чемпионкипе кĕрешсе иккĕмĕш вырăн çеç йышăнчĕ. Финалта фулл çыхăнура Г.Гималетдинов тата А.Мальцев (ДЮКФП) выляса ячĕç. Çапла вара, пирĕн команда пĕр пĕрремĕш тата виçĕ иккĕмĕш вырăнсене çĕнсе илчĕ. Ăмăртусем хыççăн ачасем пуçĕсене усмарĕç, пачах урăхла, вĕсен тата вăйлăрах хатĕрленес кăмăл çуралчĕ. Çакă пире, тренерсене, питĕ савăнтарать.

**А.ЕРМОШКИН,**
ДЮКФП тренерĕ.

Улах юррисем

## Кăвак кăвакарчăн, ай, пулас-мĕн

Тарăн шыва чăмрăм тарăн тесе,
Ăшăх çĕрте сĕлĕх пур тесе.
Ют яла та кайрăм, пĕлĕш турăм,
Хамăр ялта тăшман пур тесе.

Улача кĕпе-француз аркă,
Арки чечекĕсем пуçхĕрлĕ.
Пире пĕр курайман тăшманĕсем
Ăçта шăтăк - унта пуçхĕрлĕ.

Хыçалти хапхăра хупмастăр,
Утсем тухсан пире калатăр.
Хăвăр хĕрĕрсене чармастăр,
Ятсем тухсан пире калатăр.

Кăвак кăвакарчăн, ай, пулас-мĕн
Кăвак пĕлĕт çумне вĕçес-мĕн.
Çакăн пек мăшкăла пĕлнĕ пулсан,
Пиевçĕре чухнех вилес-мĕн.

Тăхăнмастăп кĕске сăхмана:
Икĕ аркă хушши курăнать.
Пиреех çиекен тăшманĕсен
Хăйсем мĕнли витĕр курăнать.
Тăхăнмастăп кĕске пулсан та,
Макăрмастăп нуша курсан та.

**Пухса йĕркелекенĕ**
**Е.ИЛЮШКИНА.**

*** Пирĕн пата çыраççĕ***

## Надежда Германовна - пирĕн шанчăк

Январь уйăхĕнче эпĕ 70 çул тултартăм. Вĕсенчен 50 çулне яхăн шкулта ĕçлерĕм. Çавăнпа та эпĕ халĕ те шкул пурнăçĕпе интересленетĕп. Çамрăк коллективпа пĕрле унăн ĕçĕсемшĕн савăнатăп, вĕренекенсене юрататăп, çĕнĕ шкула пăхса ытараймастăп.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче шкул территорийĕн йĕркелĕхĕнчен питĕ тĕлĕнтĕм: таса, тирпейлĕ, хитре чечексем питĕ нумай.

Пĕтĕм коллектив - çак шкулта вĕренсе тухнисем. Эпĕ, малтан шкул директорĕ пулнă май вĕсен професилле ăсталăхĕ, пĕлĕвĕ ӳснине, тăрăшнине сăнаса тăратăп. Пĕтĕмĕшле тĕрĕслев, кустри методика канашлăвĕ пулса иртнĕ вăхăтра мухтанине кăна илтетĕп. Вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Надежда Германовна Чендарева чăннипех мухтава тивĕç. Вăл Сенгилеври педучилище пĕтернĕ, кайран Елабугăри пединститутран вĕренсе тухнă. Малтанхи çулсенчех вăл хăй питĕ тăрăшуллă, тимлĕ, тирпейлĕ учительница пулнине кăтартрĕ. Урок-сене тĕплĕн хатĕрленет, ачасене хитререх çырма вĕрентес тĕлĕшпе нумай ĕçлет, методика литературипе анлă усă курать. 1997 çулхи çуркунне Нурлатра икĕ эрнелĕх курсра пулса курни питĕ савăнтарчĕ. Çакăн пек калас килет: "Вырăс чĕлхипе литератури - шанчăклă алăра".

Надежда Германовнан питĕ лайăх çемье: юратакан мăшăрĕ, хĕрĕпе ывăлĕ. Вăл сапăр кил хуçи хĕрарăмĕ. Çынсемпе кăмăллă, хисеплесе калаçать.

Надежда Германовнана çирĕп сывлăх, çĕкленӳллĕ кăмăл, ĕçре малашне те ăнăçусем, хальхи вĕрентӳ требованийĕсемпе пĕр тан пыма сунатăп.

**М.ЕГОРОВА.**
Бутаиха поселокĕ.

## Ан çĕмĕрĕр, ачасем, ан çĕмĕрĕр

"Теремок" ача-пăча сачĕн пăшăрханса ӳкнĕ воспитателĕсем унта темиçе хутчен ĕнтĕ каçхине çула çитмен ачасем кĕни çинчен каласа пачĕç. Ясли группинче (кунта кăна та мар) чӳречесене çĕмĕрнĕ, сехетсен батарейкисене, ручкăсем илнĕ. Бухгалтерие уçнă - кунтан тетрадь пачкине илсе тухса кайнă. Медсестрасен пӳлĕмне уçас тенĕ. Каçхи хулигансем вылякан площадкăри йывăçран тунă скульптурăсене пăсаççĕ, çурт тăрринчи шифер листисене çĕре ывăтаççĕ, урамри верандăсене вут чĕртеççĕ... Ачасем телевизорпа кăтартакан боевиксене курнă пулас, çавăнпа вĕсем те хăйсене вăрă-хурахсем пек кăтартасшăн. Анчах та мĕншĕн? Вĕсем хăйсем те пирĕн садика çӳренĕ вĕт, хăшĕ вара халь те хăйĕн шăллĕне е йăмăкне илсе килет. Эпир ачасемпе пĕр хутчен кăна мар калаçрăмăр, анчах та усси çук, теççĕ воспитательсем. Ачасене вылямалли вырăн çуккине ăнланмалла, анчах та кун пек "выляни" ырă ĕç патне илсе пымасть вĕт...

**<u>РЕДАКЦИРЕН.</u> "Теремок" ача-пăча сачĕн коллективĕ ашшĕ-амăшĕсене çапла калама ыйтрĕ: ырă кăмăллăрах пулăр, сирĕн ывăлăр каçхине ăçта пулнине сăнаса, контроллесе тăрăр...**

ÇЫРУСЕН ПАЙĔ.

## ПĔЛТЕРӲСЕМ

*Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутатпăр. Адрес: Московская урамĕ, 5-45, 17 сехет хыççăн пымалла.*

* * *

*Киров урамĕнчи 20-мĕш номерлĕ çурта (15 сотка участок пур) пĕр е икĕ пӳлĕмлĕ хваттерпе улăштаратăп. Адрес: Комсомольская урамĕ, 17.*

* * *

*1984 çулта туса кăларнă "рубин" тĕслĕ ВАЗ-21099 сутăнать. Телефон: 3-62-40.*

* * *

*Пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Циолковский урамĕ, 11-95.*

* * *

*"Альянс" магазин (апат-çимĕç пасарĕ) тата "Елена" магазин 1,2,3 камерăллă, тĕрлĕ моделлĕ холодильниксем, "Стинол", "Норд" морозильниксем сутаççĕ. Тӳлевсĕр леçсе параççĕ, гаранти 2 çул. Телефон: 5-41-19. Свидетельство Б-621.*

* * *

*Октябрь райповĕн Коопзаготпромĕ халăхран пахча çимĕç сутăн илет:*
*пуçлă сухан - 1 килограмне 2 тенкĕпе*
*кăшман, кишĕр - 1 килограмне 1 тенкĕпе.*
*Апат-çимĕç пасарĕнчи "Ял хуçалăх продукчĕсем" магазина е Коопзаготпромри пахча çимĕç складне пымалла.*

* * *

*Икĕ пӳлĕмлĕ хваттере сутатпăр е пĕр пӳлĕмлипе улăштаратпăр. Адрес: Заводская урамĕ, 2а-25.*

* * *

*Польшăра туса кăларнă кухня гарнитурĕсем, стенкăсем мартăн 25-мĕшĕччен сутатпăр. Телефон: 5-24-08.*

* * *

*Хула варринче 2 пӳлĕмлĕ хваттере 3 пӳлĕмлĕ хваттерпе е лайăх çуртпа хушса тӳлесе улăштаратпăр (чугун çул, сахăр завочĕн, Кăрмăш микрорайонĕсене сĕнмелле мар). 5-12-70 номерлĕ телефонпа 17 сехет хыççăн шăнкăравласа пĕлмелле.*

* * *

*Уйрăм çурта (участок, мунча, нӳхреп, гараж пур) хваттерпе улăштаратпăр. Куйбышев урамĕнчи 96-мĕш çуртри 1-мĕш хваттерте 17 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Икĕ пӳлĕмлĕ хваттере сутатпăр. Адрес: Советская урамĕ, 195-58.*

* * *

*Лайăх шайри ВАЗ-21083 васкавлă сутатпăр. Гиматдинов урамĕнчи 60-мĕш çуртри 17-мĕш хваттерте 17 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Илсе тухмалли çурт сутăнать. Кислев ялĕнчи Маулет Ганееввран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*ВАЗ-2101, Гайтан ялĕнче çурт сутатпăр, хаклă мар. Советская урамĕнчи 53-мĕш çуртри 2-мĕш хваттерте 16 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.*


*"Татнефть" АОн привилегиллĕ тата "А" категориллĕ акцийĕсене сутăн илетпĕр. Телефон 2-19-46 (Модăсен ателйи). Лицензи номерĕ - 012-00056-110000. 1997 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнче РФ ФКЦБ панă.*

***М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.***

***Пирĕн патра кăна!***

*Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!*

*Сипленĕ кун, эрнекунсенче, мартăн 27-мĕшĕнче, апрелĕн 10-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче 11 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.*


## Ĕçлĕ сĕнӳ

*Çурт-йĕр тума, производство строительствине пуçлас текенсене эпир арболит блокĕсем (250x280x50 мм) сĕнетпĕр.*

*Кирпĕчпе танлаштарсан, йĕнӳ, типĕ тата ăшă, çулталăкри хăть хăш вăхăтра та уçă сывлăш, çĕрмен стенасем - çакăн çинчен ĕмĕтленмест-и çурт хăпартма пуçланă çын. Çак материала капăрлатма та лайăх, касма çăмăл, пăта та çăмăллăн кĕрет.*

*Арболит çумне строительство валли никĕс блокĕсем, урайпа мачча валли материал, алăкпа чӳрече блокĕсем, витмелли тимĕр (2500x1250x5 мм, хура), хăма сутса пама пултаратпăр.*

*Тавар туянакансем, строительство материалĕсене инçе кайса шырамалла мар, кирлĕ тавар пирĕн вăрман хуçалăхĕнчех пур. Продукцие хамăр транспортпах леçсе пама пултаратпăр.*

*Вăрман хуçалăхĕ сирĕн регионăрта дилерсем шырать. 50 кубла метр ытла продукци сутсан дилер услугишĕн унăн хакĕн 5 процентне, 100 кубла метр ытла сутсан вара 10 процентне тӳлетпĕр.*

*Аксури вăрман хуçалăхĕнче ыйтса пĕлме пултаратăр (Аксу рабочи поселокĕ). Телефонсем: (8244) 2-12-48, 2-11-92, 2-14-32.*


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 865.